25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ИЮЛЬ 25 ВЫРСАРНИКУН 149(6386) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗĔ

Арми генералне Рокоссовский юлташа,
Арми генералне Ватутин юлташа,
Генерал-полковника Попов юлташа.

Нимĕçсем июль уйăхĕнче Орелран кăнтăрарахри тата Белгородран çурçĕререхри районсенчен Курск еннелле тапăнса пынине пирĕн войскăсем ăнăçлăн кĕрешсе ĕнер, июлĕн 23-мĕшĕнче, пуçĕпех пĕтерсе лартнă.

Нимĕçсен фашистла войскисен танксемпе пехотăран тăракан пысăк вăйĕсем, нумай йышлă авиаци пулăшса тăнипе, июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине Орелпа Курск тата Белгородпа Курск еннелле наступлени пуçласа янă.

Нимĕçсем Орелпа Белгород районĕсенче пухса тăратнă хăйсен тĕп вăйĕсене пирĕн войскăсене хирĕç наступление кĕртсе янă.

Халĕ çакă паллă пулса тăчĕ: нимĕç командованийĕ çапăçăва: Орелпа Курск енче—7 танковăй, 2 моторизованнăй тата 11 пехотнăй дивизи, Белгородпа Курск енче—10 танковăй, пĕр моторизованнăй тата 7 пехотнăй дивизи кĕртсе янă.

Çапла вара, тăшман енчен наступление нимĕçсен 17 танковăй, 3 моторизованнăй тата 18 пехотнăй дивизи хутшăннă. Çав вăйсене фронтăн ансăр участокĕсенче пухса тăратса, нимĕç командованийĕ çурçĕрпе кăнтăртан пĕр еннелле—Курск еннелле пĕр вăхăтрах харăссăн пырса çапса, Курск кукăрĕнче вырнаçса тăракан пирĕн войскăсене çавăрса илсе пĕтерсе тăкма шутланă.

Нимĕçсен çав çĕнĕ наступленийĕ пирĕн войскăсемшĕн кĕтмен çĕртен тунă ĕç пулмарĕ. Вĕсем нимĕçсен наступленине сирсе пăрахма кăна мар, хăватлăн хирĕç пырса çапма та хатĕр тăнă.

Чĕрĕ вăйпа техника тĕлешенчен çав тери пысăк çухатусем тўссе, тăшман пирĕн оборонăна Орелпа Курск енче—9 километр шалалла, Белгородпа Курск енче—15 километртан пуçласа 35 километра çити шалалла савăлланса кĕме кăна пултарнă. Хаяр çапăçусенче пирĕн войскăсем нимĕçсен суйласа илнĕ дивизийĕсене юн тăктарса халсăрлатрĕç те кайран татăклăн хирĕç пыра-пыра çапнипе тăшмана сирсе пăрахрĕç тата хăйсем июлĕн 5-мĕшĕччен йышăнса тăнă вырăна пĕтĕмĕшпех каялла тавăрчĕç кăна мар, вĕсем çавăн пекех тата тăшманăн оборонине татса кĕчĕç, Орел еннелле 15 километртан пуçласа 25 километра çити малалла куçрĕç.

Нимĕçсен наступленине пĕтерсе лартас тĕлĕшпе туса ирттернĕ çапăçусем пирĕн войскăсен çапăçури пысăк ăсталăхне, пур тĕрлĕ войскăсенчи боецсемпе командирсен, вăл шутра артиллеристсемпе минометчиксен, танкистсемпе летчиксен никам çитейми чăтăмлăхĕпе çирĕплĕхне тата паттăрлăхне кăтартса пачĕç.

Çапла ĕнтĕ, нимĕçсен çуллахи наступленийĕн планĕ пĕтĕмĕшпех путланса ларнă тесе шутламалла

Çакăнпа ĕнтĕ нимĕçсем çулла наступлени туса яланах ăнăçу тăваççĕ, совет войскисен вара ирĕксĕрех каялла чакма лекет тесе калакан юмаха тăрă шыв çине кăларнă.

Нимĕçсен наступленине пĕтерсе лартассишĕн пынă çапăçусенче генерал-лейтенант Пуховăн, генерал-лейтенант Галанинăн, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн Родинăн, генерал-лейтенант Романенкон, генерал-лейтенант Колпакчин, генерал-лейтенант Чистяковăн, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн Катуковăн, танковăй войскăсен генерал-лейтенанчĕн Ротмистровăн, генерал-лейтенант Жадовăн, генерал-лейтенант Шумиловăн, генерал-лейтенант Крюченкинăн войскисем, авиаци генерал-полковникĕн Голованковăн, авиаци генерал-лейтенанчĕн Красовскин, авиаци генерал-лейтенанчĕн Руденкон тата авиаци генерал-лейтенанчĕн Науменкон авиаци соединенийĕсенчи летчиксем уйрăмах палăрнă.

Июлĕн 5-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинчи çапăçусем вăхăтĕнче тăшман çакăн пек çухатусем тўснĕ: салтаксемпе офицерсене 70.000 ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 2.900 танк персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, хăй тĕллĕн куçса çўрекен 195 оруди, 844 полевой оруди, 1.392 самолет тата 5.000 ытла автомашина пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсен çуллахи наступленине ăнăçлăн пĕтерсе лартнă ятпа Сире тата Эсир ертсе пыракан войскăсене ырă сунса саламлатăп.

Питех те чаплă боевой ĕçсемшĕн Эсир ертсе пыракан войскăсен боецĕсемпе командирĕсене тата политработникĕсене тав туни çинчен пĕлтеретĕп.

Хамăрăн Тăван çершывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн кĕрешсе çапăçу хирĕнче пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр чап та мухтав.

Верховный Главнокомандующий
Совет Союзĕн Маршалĕ *И. СТАЛИН.*

Кировецсем пек ĕçлеме пулаççĕ

Ĕнер Шупашкарти чăлха çыхакан фабрика коллективĕ кировецсен чĕнĕвне сўтсе-явре. Кашни рабочипе работница çав паха пуçарăва хапăлласа йышăнчĕç, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. О. Матюшко, Ф. Кашинская, Крылова, Каменецкая Ерусова работницăсем ĕç нормине 200 процентран кая мар тултарма пулчĕç.

Фабрика коллективĕ июль уйăхĕнчи программăна 5 кун малтан пурнăçлама пулчĕ.

Е. БОГУСЛАВСКАЯ,
фабрика директорĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛ енче, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, наступлени туса пынă, 4—6 километр малалла куçнă.

БЕЛГОРОД енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн контратакисене сирсе пăрахса, 6—8 километр малалла куçнă.

Кăнтăрта, Донбасра, ИЗЮМРАН КĂНТĂРГАРАХРИ тата ВОРОШИЛОВГРАДРАН КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНАÇНЕРЕХРИ районра пирĕн войскăсем, вырăнти çапăçусем туса пырса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

КРАСНОДАРТАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, вырăнти атакăсем туса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Июлĕн 22-мĕшĕнче Орел енче пирĕн войскăсем нимĕçсен 92 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе тăшманăн 112 самолетне ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орел енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла наступлени туса пынă.

Орелран çурçĕререхре, пирĕн войскăсем ĕнер йышăнса илнĕ Болхов хули районĕнче, нимĕçсем темиçе хутчен хаяр контратакăсем туса пăхнă. Совет чаçĕсем, тăшман контратакисене пурне те сире-сире пăрахса, нимĕçсен пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ тата 43 танк пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче—9 танк, 16 оруди. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем вăйлăн çапăçса тăшманăн çирĕп тĕреклетнĕ пунктне йышăнса илнĕ. Çак пунктшăн пынă çапăçусенче нимĕçсен 1800 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 28 танкне тата хăй тĕллĕн куçса çўрекен 8 орудине персе çĕмĕрнĕ.

Орелран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем малалла куçса пынă. Юханшыв хĕрринче çирĕпленсе ларса, нимĕçсем наступлени туса пыракан совет чаçĕсене чарса лартма хăтланнă. Пирĕн боецсем, çисĕмлĕ хăвăрт пырса çапса юханшыв урлă каçнă та, хаяр çапăçусем хыççăн халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Кункаçиччен çав участокра 2000 ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Орелран кăнтăрарахра пĕр участокра кăна гитлеровецсен икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 14 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕн чаçсем продовольстви, боеприпассемпе çар пурлăхĕсем хунă темиçе склада тытса илнĕ.

* * *

Белгород енче пирĕн войскăсем, тăшманăн контратакисене сире-сире пăрахса, малалла куçса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити, нимĕçсен 10 танкне, 5 бронетранспортне тата хăй тĕллĕн куçса çўрекен 8 орудине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн тепĕр соединенин чаçĕсем 8 километр малалла куçнă. Гварди старши лейтенанчĕ Семин, 25 автоматчикпа пĕрле, тăшман çине кĕтмен çĕртен тапăнса халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илнĕ те ăна хамăрăн тĕп вăйсем пырса çитиччен тытса тăнă. Гварди лейтенанчĕ Кушлянский ертсе пыракан артиллери взвочĕ, тăшманăн контратакисене сире-сире пăрахса, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрне

* * *

Изюмран кăнтăрарахра вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Тăшман малтанхи кун çухатнă позицисене каялла тавăрма хăтланнă, анчах ăнăçу тăвайман. Нимĕç пехотин полкĕ тата 80 танк пирĕн пĕр чаçа хирĕç контратака тунă. Пирĕннисем артиллерирен персе кĕтсе илнипе, гитлеровецсем, çапăçу хирне çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ 18 танк тата хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 600-ре çити виллине пăрахса хăварса каялла чакнă. Пĕр чаçăн боецĕсем малалла куçса пынă чухне тăшман вăйлăн персе тăнипе тĕл пулнă. Старши сержант Мамунц тата красноармеец Даушвили тăшман дзочĕ патне систермесĕр шăвăнса пынă. Нимĕçсем çав дзотран тăвăллăн персе тăнă пулнă. Пирĕн боецсем дзота гранатăсем пăрахса, унти гитлеровецсемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă. Капитан Собакарь юлташ командир пулса тăракан подразделенири красноармеецсем харăслатса персе нимĕçсен пикировка тăвакан икĕ самолетне ўкернĕ. Пĕр участокра Хĕрлĕ Çар енне нимĕç салтакĕсен темиçе ушкăнĕ куçнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, малалла активлăн кĕрешсе пырса, темиçе меллĕ позици йышăнса илнĕ. Пĕр соединенин чаçĕсем 4 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен темиçе пин салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ тата тăшман техникине нумай пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем темиçе хутчен те контратакăсем туса пăхнă. Гварди капитанĕ Калинин командир пулса ертсе пыракан батальон гитлеровецсен темиçĕ хаяр контратакине сирсе пăрахнă тата тăшмана чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тўстернĕ. Старши лейтенант Ежков ротинчи бронебойщиксем кункаçиччен тăшманăн 5 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн разведка тăвакан отряд тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне пырса тапăннă. Йĕплĕ пралук карти витĕр тухса, красноармеецсем-разведчиксем тăшман траншейисене çĕмĕрсе кĕнĕ те, алвĕççĕн тăрса çапăçса 40 нимĕçе вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Балти флочĕн летчикĕсем тăшман транспорчĕсене атакăланă. Сăнанă тăрăх, торпеда нимĕçсен 8.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тўррĕнех лекнине палăртнă. Транспорт çĕмĕрĕлсе шыва путнă.

* * *

Житомир облаçĕн районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ минăсем лартса нимĕçсен танксем турттарса пыракан эшелонне сирпĕнтерсе янă. Паровоз тата 22 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Танксем пурте юрăхсăра тухнă. Тепĕр темиçе кунран çав отрядри партизансем чугунçулăн тепĕр участокĕнче тăшманăн тепĕр икĕ çар поездне ўпĕнтерсе янă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Канашри вагонсем юсакан заводăн заточнăй тата термически отделенийĕн мастерне П. С. Петрова Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Вырăнти чĕртавартан хăйрамалли чулсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе пуçарулăх кăтартнăшăн тата çав чулсене хатĕрлеме тытăннăшăн Канашри вагонсем юсакан заводăн заточнăй тата термически отделенийĕн мастерне Петр Сергеевич **Петрова** Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн **Хисеплĕ грамотипе** наградăлас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 çулхи июлĕн 21-мĕшĕ

Пĕр кун хушшинче 1365 тонна силос хывнă

СĔНТĔР. Июлĕн 18-мĕшĕнче районра комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртрĕ. Колхозсенчи мĕнпур çамрăксем выльăх-чĕрлĕх валли силос хывас ĕçре пулчĕç. Вĕсем кункаçах хĕрўллĕн ĕçлерĕç. Çак кун «Колос» колхоз çамрăкĕсем 103 тонна силос хыврĕç. «Авангард» колхозра силос хатĕрлес плана уйăхчченех тултарнă пулнă. Воскресника активлăн хутшăнса ку колхозри комсомолецсемпе çамрăксем планран ирттерсе татах 50 тонна силос хывса хăварчĕç. «Родина» колхозра силослăх курăк пухма шкул ачисем активлăн тухрĕç. Вĕсене учительница Плотникова юлташ ертсе пычĕ.

Пĕтĕмĕшпе илсен, воскресникĕн результачĕ аван пулчĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли пĕр кун хушшинче 1365 тонна силос хывса хăварнă.

А. СОЛОВЬЕВ.

1943 çулта Чăваш АССР-енчи колхозсемпе совхозсенче кĕрхи тырăсем акасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла шутлаççĕ: кĕракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерни 1944 çулта вăйлă тырпула илмелли тĕп никĕс пулса тăрать. Çĕртме тăвас, çĕртме пуссине пăхса тăрас тата кĕрхи тырăсене ирттерех те кĕске срокcенче акса хăварас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене вăхăтра туса ирттернине пула, республикăри чылай колхозсем 1943 çулта кĕрхи тырăсене тухăçлăн туса илме пултарчĕç.

Республикăри нумай колхозсем кăçалхи çул та таса çĕртмене вăхăтра туса хăварчĕç тата мĕнпур пухăннă тислĕксемпе ытти удобренисене çĕртме пуссине кăларчĕç. Çĕртме пуссине тислĕк турттарас ĕçе çак районсенчи колхозниксем уйрăмах лайăх организацилерĕç: Сĕнтĕр районĕ тислĕк тăкмалли çулталăкри плана 178 процент, Вăрнар районĕ—144 процент, Элĕк районĕ—141 процент, Красноармейски район—132 процент чухлĕ пурнăçа кĕртрĕç.

Çакăнпа пĕрлех Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: Чкаловски, Кувакино, Пăрачкав, Первомайски районсен руководителĕсем иртнĕ çулхи уроксене шута илмерĕç. Пĕлтĕр çĕртме сухине вăхăтра туман пирки тата начар сухаланă пирки, çĕртме пуссисене çумкурăксем вăйлăн пусса илчĕç. Кĕрхи тырăсене кая юлса, начар сухаланă çĕр çине акнă пирки, çав районсенчи колхозсенче кĕрхи калчасем хĕле вăйсăр кĕчĕç, 1943 çулхи çуркунне вара калчасен пĕр пайĕ çĕрсе пĕтрĕ. Çав районсен руководителĕсем çĕртме сухине вăхăтра туса хăварас тĕлĕшпе кăçалхи çул та тивĕçлĕ мерăсем йышăнмарĕç. Çĕртме тумалли плана июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне Пăрачкав районĕнче 67 процент, Кувакино районĕнче—64 процент, Первомайски районĕнче—61 процент, Чкаловски районĕнче—96 процент чухлĕ кăна пурнăçа кĕртнĕ. Хăшпĕр районсенче вырăнти удобренисемпе начар усă курнă. Канаш районĕнче уя тислĕк кăлармалли плана 29,1 процент, Вăрмар районĕнче—68 процент кăна пурнăçланă.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. 1943 çулта кĕрхи тырăсене августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен акмалла тăвас, кĕрхи тулла ирхи çĕртме тунă, удобрени тăкса çемçетнĕ участоксем çине кĕракин малтанхи 3—5 кунĕ хушшинче акса хăвармалла.

2. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхоз председателĕсене таса çĕртме тăвас ĕçе халех вĕçлеме хушас. Ăшах сухаланă тата çумкурăксем пусса илнĕ участоксене августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр 18—20 сантиметр тарăнăш тепĕр хут сухаласа хăвармалла. Ирхи çĕртме лайăх тунă вырăнсенче çумкурăксем пулсан, культиваци е лущени туса ирттермелле.

3. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем кăçал ыраш акмалли вырăнсенчи тырпулсене пухса илессине кая хăварнине, çапла вара кĕракине хатĕрлевес ĕçе вăраха янине тĕрĕс мар тесе шутласа, Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, колхоз председателĕсене çĕртме çинчи викăна халех çулса илме, пушаннă участоксем çине тислĕк турттарма тата çав участоксене тарăн сухаласа пăрахма хушас.

Çĕртме çине тăштырă туса илме акнă тырпулсене вĕсен тĕшши ăвăса ларсан пухса илсе, вĕсене çав участоксенчен çиĕнчес турттарса тухмалла. Çĕртме çине çĕрулми лартнă пулсан, ăна 1943 çулхи августăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр кăларса пĕтермелле.

4. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, колхозсен правленийĕсене çултан çул куçса пыракан вăрлăх фончĕсене хывакан кĕрхи тыра вăрлăхĕн пахалăхне вăрлăх тĕрĕслемелли лабораторисенче августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тĕреслесе тухмалла, вăрлăхсене тĕплĕн сортласа тасатмалла, вĕсене протравливани тума кирлĕ таран химикатсем хатĕрлесе хумалла. Протравливани туман тата кондициллĕ мар вăрлăхсем акма чарас.

Куçакан вăрлăх фончĕсем ситмен колхозсемпе совхозсенче пулса çитнĕ вăрлăх участокĕсене вăхăтра пухса илессине, вăрлăхсене çапса, сортласа тасатассине организацилемелле.

5. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, Чăвашсен государственнăй селикционнăй станцине, райсемхозсене тата райсовет исполкомĕсене сортлă вăрлăхсем акнă участоксем çинчен тырпула вăхăтра пухса кĕртсе, аван çапса, госсортфонда сортлă тĕштырă памалли плана августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пурнăçа кĕртме хушас.

Госсортфонда, райисполкомсене тата колхоз председателĕсене колхозсенчи вăрлăх участокĕсене акса хăвармашăн кĕрхи тырăсен сортлă вăрлăхĕсене колхозсем хушшинче улăштарса илмелли плана вăхăтра тата пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушас.

6. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, райçĕрĕç пайĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата колхозсен правленийĕсене çапла тума хушас:

а) вăрлăхлăх акмалли кĕрхи тыра участокĕсене августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, чи лайăх тата удобрени хывса çемçетнĕ вырăнсенче уйăрса памалла, вĕсене кĕракин малтанхи кунĕсенче акса хăвармалла;

б) сеялкăсем, культиваторсем, плугсемпе сўресем юсавлипе юсавлă маррине тĕрĕслесе тухса, вĕсене августăн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса çитермелле;

в) сеялкăсене тивĕçлĕ норма акмалла туса тата вăрлăха тивĕçлĕ тарăнăш витсе хăвармалла туса майлаштарса лартмалла. Сеялкăсене кĕракинче май килнĕ таран тухăçлăн ĕçлеттерес шутпа, вĕсемпе ĕçлеме çынсемпе лашасем уйăрса хумалла;

г) колхозсенче акнă çĕрлаптăкĕсене колхозниксенчен бригадирсем куллен йышăнассине, бригадирсенчен вара—колхоз председателĕсем йышăнассине организацилемелле.

Кĕрхи ака мĕнле пынине тата унăн пахалăхне çирĕппĕн контрольлесе тăмалла, çак ĕçе агрономсене, çавăн пекех тата пахалăх инспекторĕсене явăçтармалла

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Комсомолецсем аван ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. Комсомолăн «Родина» колхоз çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ А. Майков) колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе аван туса пырать. Ку ĕçе вĕсем союзра тăман çамрăксене те явăçтарнă. Комсомолецсем хушшинче нормăна тултараймасăр ĕçлекен пĕр. çын та çук. Комсомолецсем пуçарнипе бригадăсем пĕр-пĕрине ăмартаççĕ. Ăмăртура И. Милидоков ертсе пыракан бригада малта пырать.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх йышне ўстермелли задание вăхăтра пурнăçласа пырать. Пăрусемпе путексене пурне те сыхласа усраççĕ. Кашни ĕнерен планран ирттерсе сĕт суса илнĕ. Çакăншăн ферма заведующийĕ пулса ĕçлекен комсомолка А. Фадеева ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Комсомол организацийĕ колхозпа пĕрле «Родина» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăрать. Стена хаçатĕнче колхозниксен ĕç опычĕсемпе паллаштаракан обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен çырнă заметкăсем пичетлеççĕ. Çавăн пекех колхозри çитменлĕхсене те сутатса тăраççĕ. Çитменлĕхсем çинчен çырнă материалсене комсомолецсен пухăвĕнче сўтсе-явса кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Çапла, июнĕн 20-мĕшĕнче тухнă хаçатăн номерĕнче ĕçкунĕсен минимумне тултарайман колхозниксем çинчен статья тухнă. Пухура сўтсе-явнă хыççăн çав колхозниксем ĕçкунĕсен минимумне тултарма сăмах пачĕç.

М. Пульков

КОК-САГЫЗ АКНĂ ХИРТЕ

ЕЛЧĔК. **(Телефонпа).** Ленин ячĕпе тăракан колхозăн кок-сагыз плантацийĕнче хĕрўллĕ ĕç пырать. Çĕнĕ культурăпа ĕçлекен бригада (бригадирĕ Агеев юлташ) иртнĕ çул кĕркунне акнă кок-сагызăн вăрлăхне пухать. Тухăçлăн ўсрĕ кăçал çак паха культура. Икĕ центнер та 200 килограмм вăрлăх пухса илнĕ. Çитес кунсенчех бригада кок-сагызăн тымарне кăларма тытăнать.

Уйхирте ывăнма пĕлмесĕр тухăçлăн ĕçлесе тăван Хĕрлĕ Çара пулăшар!

Тырă вырас ĕç массăллăн пуçланчĕ

Тырă вырас ĕç республикăри колхозсенче массăллăн пуçланчĕ.

Малтанхи хыпарсем тăрăх, уборка ĕçĕсемпе çуракинчи пекех Елчĕк районĕ малта пыни курăнать. Елчĕк районĕнчи колхозсем ĕçре машинăсемпе анлăн усă кураççĕ. Çавăнпа та тырă вырас ĕç малтанхи кунсенчех пысăк хăвăртлăхпа пуçланчĕ. Июлĕн 21-мĕшĕ тĕлне кунти колхозсем пурĕ 1097 гектар тырă вырса пухрĕç, вăл шутра жнейкăсемпе 578 гектар вырнă. Кашни талăк хушшинче Елчĕк районĕ халĕ вăтам шутпа 582 гектар тырă вырать.

Çавăн пекех Комсомольски, Вăрнар, Чкаловски, Первомайски тата Вăрмар районĕсенче те колхозсем тырă вырма массăллăн тухнă. Анчах ĕçĕн тухăçлăхĕ халĕ пур районсемпе колхозсенче те мар-ха çителĕклĕ. Асăннă районсенче кĕрхи тырăсем пур çĕрте те пекех пулса çитнĕ ĕнтĕ. Пĕр тăхтаса тăмасăрах пĕтĕм машинăсене, пĕтĕм ĕç вăйне уборкăна кăлармалла.

Комсомольски районри 51 колхозран ыраш вырма 44-шĕ çеç тухнă. Талăк хушшинче кунта, пĕтĕмĕшпе илсен, 305 гектар тырă выраççĕ. Çапла июлĕн 21-мĕшĕ тĕлне Комсомольски районра пурĕ 582 гектар çинчи ыраша вырса пухнă. Ĕç тухăçлăхĕ кунта кирлĕ пек ÿссе пырать теме çук. Комсомольски районри колхозсем тырă вырас ĕçе нумай хăвăртрах туса пыма пултараççĕ. Кунти колхозсенче ĕçлеме пултаракан жнейкăсем 116, анчах вĕсемпе халĕ мĕн пурĕ те 144 гектар çеç вырнă.

Тырă вырмалли машинăсем пуринчен ытларах Чкаловски районри колхозсенче хисепре мар. Нумай колхозсен хирĕсенче ыраш пулса çитнĕ. Халех вырас пулать. Анчах ĕçе пур çĕрте те массăллăн тытăнни çук-ха. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне 361 гектар çеç вырнă, вăл шутра жнейкăсемпе мĕнпурĕ те 32 гектар çеç вырнă.

Первомайски районра, Вăрман ăшĕнчи колхозсемсĕр пуçне, кĕрхи тырăсем пур çĕрте те пулса çитнĕ. Анчах уборка ĕçне пур колхозсем те мар тухнă.

Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлени, йĕркеллĕ дисциплинăллă пулни кирлĕ. Пуян тырпула хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ пек пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер!

Государствăна çĕнĕ тырă пама тытăнчĕç

ТĂВАЙ, июлĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). „Горьковская Коммуна" тата Смидович ячĕпе тăракан колхозсенче уборка ĕçĕсем „пысăк хăвăртлăхпа пулса пыраççĕ. Ку колхозсем тырра 4—5 кун хушши массăллăн вырнă хыççăнах авăн çапма тытăнса, чи малтанхи таса та шултăра тырра государствăна пама пуçларĕç. Ĕнер „Горьковская Коммуна" колхоз районра чи малтан „Заготзерно" пунктне икĕ лав çĕнĕ тырă леçсе пачĕ. Паян Смидович ячĕпе тăракан колхозра государствăна çĕнĕ тырă леçме хĕрлĕ обоз организациленĕ.

Смидович ячĕпе тăракан колхозри агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ „1943 çулхи тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен" йышăннă постановление тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн уйхирте ĕç тухăçлăхĕ татах ÿсрĕ. Ĕç нормине тултарман колхозниксем кунта пачах çук. Агитаторсем хăйсем куллен уйра ĕçлесе пример кăтартса параççĕ. Агитатор А. Зубова юлташ, тĕслĕхрен, тырă вырнă çĕрте ĕç нормине кулленех 150—170 процент тултарать.

А. КАХОВСКИЙ.

Вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлеççĕ

КУСЛАВККА. Районри предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем хĕл валли вутă хатĕрлес ĕçе хĕрсех тытăнчĕç. Варасар ялсовечĕ (председателĕ Мишуткин юлташ) шкулсемпе фронтовиксен çемйисем валли 1300 кубометр вутă хатĕрлерĕ. Куснарти туллимар вăтам шкул коллективĕ 239 кубометр хатĕрлесе хучĕ. Тукаваш ялсовечĕ 150 кубометр хатĕрлесе турттарчĕ. Воробьевка тата Карач ялсовечĕсем те кирлĕ таран хатĕрлесе çитерчĕç.

Анчах районри хăшпĕр учрежденисемпе шкулсем ку ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Юнсарти пуçламĕш, Масловкăри тата Салари туллимар вăтам шкулсем паянхи куна та ку ĕçе пуçăнман. Салари туллимар вăтам шкулăн 243 кубометр вутă хатĕрлемелле, ку таранчен пĕр кубометр та хатĕрлемен.

Райпромкомбинат, Чăвашторгăн районри уйрăмĕ, ФЗО шкулĕ те вутă хатĕрлес ĕçе тытăнман. Район вырăнти предприятисем валли вутă хатĕрлес плана 50 процента яхăн çеç пурнăçланă. Ялсоветсемпе предприятисен руководителĕсен хĕле вутă хатĕрлес ĕçе тивĕçлипе тытăнмалла. Ку ĕçе вăраха ямалла мар.

И. ШАРКОВ.

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелне тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Июлĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем Орел чугунçул узелне тата тăшманăн аэродромĕсене тапăннă.

Пирĕн самолетсем нимĕçсен Орел чугунçул узелĕнче тăракан эшелонĕсем çине тата çав районра вырнаçнă склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула нумай çĕрте пушарсем тухнă, вĕсемпе пĕрле вăйлă взрывсем пулнă. Çавăн пекех нимĕçсен Орел хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра пухăнса тăнă войскисем çине те бомбăсем нумай пăрахнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн темиçе аэродромĕ çине ăнăçлăн бомбăсем пăрахнă. Нимĕçсен çав аэродромсем çинче пулнă нумай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Боевой заданирен пирĕн 3 самолет таврăнман.

Пирĕн авиаци Орел, Лозовая, Краматорская чугунçул узелĕсене, Карачев, Харцызск станцийĕсене тата тăшманăн аэродромĕсене тапăнни

Июлĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем Орел, Лозовая, Краматорская чугунçул узелĕсене, Карачев тата Харцызск станцийĕсене тапăннă. Нимĕçсен эшелонĕсем çине, çавăн пекех тăшманăн çав чугунçул узелĕсемпе станцийĕсен районĕсенче вырнаçса тăракан çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула нумай çĕрте пушарсем тухнă, пушарсемпе пĕрле вăйлă взрывсем пулнă

Пирĕн авиаци çавăн пекех тата нимĕç самолечĕсем пухăнса ларнине асăрханă аэродромсем çине те бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе тăшманăн чылай самолечĕсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ тата аэродромсем çинчи сооруженисене вăйлăн сиенленĕ.

Пирĕн 4 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Кашни пучахра 80 пĕрчĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Нумай колхозсен хирĕсенче тырă кăçал питех те лайăх пулнă. Суйламасăр илсе шутласа пăхсан та кашни пучахрах ыраш 80 пĕрчĕрен кая мар. Халĕ колхозниксем ăнса пулнă пуян тырпула пухса кĕме хастарлăн тытăннă. Паян районра 44 колхоз хĕрсех тырă вырать.

Именкасси ялсоветĕнчи „Малалла" колхоз виççĕмĕш кун, Алманчăри „12 лет Октября" колхоз тăваттăмĕш кун тырă выраççĕ. Паян Янчеллă ялсоветĕнчи „Новая сила", „Победа", Кушар ялсоветĕнчи Буденный ячĕпе тăракан тата „Янмурзино", Красноармейски ялсоветĕнчи „Победа", „Пахарь" колхозсем вырма тытăнчĕç.

„Янмурзино" колхоз хирĕнче икĕ жнейка ĕçлет, 540 çын çурласемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе выраççĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра 7 колхозник ыраша кĕреплеллĕ çавасемпе çулаççĕ, машиновед М. Гордеев жнейкăпа вырать.

Анчах тырă вырас ĕç пур колхозсенче те мар-ха çакăн пек пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Тырă симĕс, вырмалла пулман теме халĕ ĕнтĕ сăлтав çук. Анчах хăшпĕр колхозсен руководителĕсем халĕ те ĕçе тухма иккĕленсе тăраççĕ. Красноармейски ялсоветĕнчех „Осоавиахим", „Комбайн", „Большевик" колхозсем тырă вărма халĕ те тухман.

С. ШАДИН.

Ик-виçĕ куна усăсăр çухатрĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Арапуç ялсоветĕнчи „Социализм çулĕпе" колхозра ик-виçĕ кун ĕнтĕ хĕрсех тырă выраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ. Тухăçлăн ĕçлеме колхозра пур условисене те туса панă. Столовăй ĕçлет, ача ясли организациленĕ. Тырă вырмалли машинăсене вăхăтра, лайăх юсанă. Вĕсемпе халь кулленех тырă выраççĕ. Колхозниксем малтанхи кунах нумайĕшĕ ĕç нормине ирттерсе тултарчĕç, бригадăсенче тухакан боевой листоксем çинче тата колхозăн хисеп хăми çинче вĕсен ячĕсем палăрчĕç.

Çак вăхăтрах Буденный ячĕпе тăракан колхоз ик-виç куна усăсăр çухатрĕ. Тырă пулса çитнĕ пулсан та, кунта вырма вăхăтра тухмарĕç. Ĕçе тухрĕç, анчах çапах пурте мар.

Хăшпĕр колхозсенче ачасен яслипе столовăй организацилес ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Çавна пула чылай хĕрарăмсем ĕçе тухма пултарайманнине шута илмеççĕ. Тата тырă вăйлă пулчĕ тесе, ăна жнейкăсемпе вырма хăраса тăраççĕ. Çапла, сăмахран, Ленин ячĕпе тăракан тата „Авангард" колхозсен руководителĕсем тырă ванасран хăраса жнейкăсемпе вырмаççĕ.

Çак çитменлĕхсене халех сирмелле. Тăхтаса тăрас шухăша йăлтах пĕтермелле, тырра хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕрессишĕн пĕтĕм вăя хумалла.

В. ДАВЫДОВ.

Жнейкăсене хакламаççĕ

ЭЛĔК. Пур çĕрте те тенĕ пекех ыраша çурласемпе çеç выраççĕ. Жнейкăсемпе тата кĕреплеллĕ çавасемпе вырма та май пур, анчах вĕсемпе ĕçлессине кирлĕ пек хакламаççĕ. Çавна пула тепрер икĕ кунтан районри хăшпĕр колхозсен хирĕнче тырă тăкăнма пуçлас хăрушăлăх пур.

Самушкинăри „Красное Сормово" колхозăн ыраш талккишĕпех пулса çитнĕ. Анчах тата тепĕр хут асăнтарнă хыççăн çеç кунта паян икĕ жнейкăпа вырма тытăнчĕç, 40 çын çурлапа вырма тухрĕ.

Х. ЛИСИН.

1943 çулшăн тырă парса татрĕ

КАЛИНИНО. Июлĕн 22-мĕшĕ (Телефонпа). Юнтапари „Алмаз" колхоз июлĕн 20—21-мĕш кунĕсенче 36 лавран хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна 100 центнер тырă леçрĕ. Çапла колхоз 1943 çулшăн государствăна тырă памалли плана 100 процентчĕпех тултарчĕ.

В. ЗАЙЦЕВ.

„Кашни пĕрчĕ тăшмана пуçран çапать"

ШĂХАСАН. (Хамăр корр., Телефонпа). Районри колхозсем нумайĕшĕ тырă вырма тытăнчĕç. Пушанарти Калинин ячĕпе тăракан колхоз малтанхи кунах тырă вырма организованно тухрĕ. Эпир кунĕпех колхозниксем ĕçленĕ çĕрте пултăмăр. Кунта кашни колхозникпе колхозница ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз малтанхи кунах 12 гектар тырă вырчĕ.

Колхозри чылай колхозниксем тырпула тăкаксăр, вăхăтра пухса кĕме тăрăшаççĕ. Эпир 76 çулхи колхозница М. Петрова кăçалăкĕ умне пытăмăр. Пуçне çĕклемесĕр вырать вăл хÿхĕм ыраша. Унта юнашарах 52 çулхи М. Кузьмина, Ф. Яковлева колхозницăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем виççĕшĕ те ватă, анчах çамрăксемпе танах ĕçлеççĕ.

— Кашни пĕрчĕ тăшмана пуçран çапать. Çавăнпа та тырра васкаса вырас пулать,—тет колхозница М. Петрова.

Кас пулсан колхозниксем мĕнле ĕçленине пăхса тухрĕç. Çÿлте асăннă ватă колхозниксем пурте нормăсене ирттерсе тултарчĕç. Вĕсем кашниех 0,14—0,15 гектар тырă вырнă. 12 çулхи Максимовăпа 11 çулхи Галкина та нормăна 120 процент тултарнă. Анчах 2-мĕш бригадăри колхозниксем, ыраш чĕрĕ тесе, кун касиченех сÿрĕккĕн ĕçлерĕç. Кунта агитаторсем те хирте тухса курмарĕç. Колхозра машинăсене хакламаççĕ, кĕреплеллĕ çавасемпе усă курма пултараççĕ. ВКП(б) райкомĕн работникĕсем çакна пĕлеççĕ, ăна пĕтерес тĕлĕшпе нимĕнле мерă та йышăнмаççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Чугунçул çинче ĕçлекенсен уявĕ тĕлне

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ чугунçул çинче ĕçлекенсен уявĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, июль уйăхĕнче пĕтĕм продукци кăларас плана 10 процент ÿстерсе тултарма пулчĕ. Уяв умĕнхи ăмăртура рабочисемпе работницăсем задание кашни куллен 200 процентран кая мар тултарма, продукцин хăйне ларакан хакне 4 процент чакарма, рационализаторла сĕнÿсем парса 100 пин тенкĕлĕх тупăш илме обезательство илчĕç.

Соколовский начальник пулса ĕçлекен цех июль уйăхĕнчи плана ытлашшипех пурнăçларĕ. Июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне кашни цех уйăхри программăна тултарма пулчĕ.

Çĕрпÿ хула совечĕ тасалăхшăн тăрăшмасть

Ку вырăна ĕлĕк вилнĕ выльăх-чĕрлĕхсене килсе пытарнă. Халĕ унта «Перламутр» артель салотопка лартнă. Анчах салотопка икĕ çултанпа ĕçлемест. Халь каллех выльăх масарĕ. Анчах выльăх виллисене никам та шăтăк чавса чикмест, килеççĕ те пăрахаççĕ. Вара тĕрлĕ чирпе вилнĕ выльăхсен шăммисене йытăсем ăçта килнĕ унта пырса пăрахаççĕ. Кунтан инçех мар Заготскот контори вырнаçнă. Заготскот контори хула советĕнчен тата «Перламутр» артель дирекцинчен темиçе хут та çакăн пирки мерăсем йышăнма ыйтнă, анчах нихăшĕ те нимĕн те туман.

Çĕрпÿ хула совечĕ тасалăхшăн тăрăшма пуслĕ-ши?

И. МАЛГАЙ.

Вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитнĕ

ИШЛЕЙ. Мăналри туллимар вăтам шкул çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитрĕ. Вĕренÿ çулĕ пĕтнĕ хыççăнах классене, партăсене çуса тасатса лартнă. Çитес вĕренÿ çулĕ валли учебниксем пур классем валли те çитеççĕ. Перо, ручка, карандашсем хатĕр. 1-мĕш тата V классене килекен ачасене шута илсе тухнă. Шкул учительсен вăйĕпе 50 кубометр вутă хатĕрленĕ.

Ал. ТОЛСТОВ.

Ют çĕршывсенче

Оттавăри пресс-конференцире Жиро тухса калани

ОТТАВА, Пресс-конференцире Жиро генерал тухса француз чĕлхипе сăмах каланă. Парламентри журналистсем пĕлтернĕ тăрăх, Жиро вăрçă ĕçĕсен хальхи тапхăрти лару-тăрăвĕ çине питех те хаваслăн пăхни курăнать. Вăл çапла каласа панă: „Германие çĕнтернĕ ĕнтĕ, халĕ кунта вăл хăй парăннине хăçан йышăнасси пирки çеç ыйту тăрать". Ку вăрçă,—тенĕ Жиро,—пĕр иккĕленмесĕрех Германипе Япони тĕппипех арканнипе пĕтет темелле. Итали çинчен каламалли те çук, вăл хальхи вăхăтра та юлашки сывлăшĕпе кăна сывласа тăрать. Малалла Жиро хăй Канадăна тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене мĕн сăлтавпа пыни çинчен каласа панă. Эпĕ кунта французсен Çурçĕр Африкăри войскисем валли хĕçпăшал туянас пирки калаçмашкăн килтĕм, тенĕ вăл.

Германин шалти пурнăçĕпе паллаштарнă май, Жиро хăй унта тыткăнра пулнă чухне курса сăнанисем çинчен каласа панă.—Германи халăхĕн шухăш-кăмăлĕ начарланчĕ, ку вăл уйрăмăнах Германи Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăннă хыççăн палăрчĕ, тенĕ Жиро. Жиро сăмахĕсем тăрăх, вăл нацистсен верховнăй командованийĕ вăрçă пуçланă чухне кăларнă приказа курнăмĕн, çав приказра вырăс çарĕсен тĕрекĕ 6 эрнерен пĕтмелле тата советсен политикăллă стройĕ виçĕ эрнене çеç пыма пултарать, тесе кăтартнă пулнă. Германи халăхĕн шухăш-кăмăлне пуринчен ытла 1941—1942 çулхи хĕллехи вăрçă ĕçĕсем салхулатрĕç, мĕншĕн тесен нимĕçсем хĕллехи кампание нимĕн те хатĕрлеймен. Çакна пула, хĕл валли ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе унта халăха хытă хĕсме лекнĕ. „Германири граждăнла халăха хăйĕн хĕллехи тумтирĕсене парасси питех йывăр пулчĕ",—тенĕ Жиро. Анчах та ку ăшă тумтирсем фронта ытла кая юлса çитнĕ, вĕсене иличчен фронтри нимĕç салтакĕсем сивĕпе шăнса нумай пĕтнĕ. Жиро каланă тăрăх, Брестпа Бреславль хушшинчи чугунçул çинче 50-шар вагонран тăракан виçĕ поезд вилес пек шăнса хытнă Германи салтакĕсене кашни кун турттарнине вăл хăй куçĕпех курнă. 1942 çулхи çуллахи кампани, нимĕçсен планĕ тăрăх, вĕсене татăклă çĕнтерÿ кÿмелле пулнă; анчах ку кампани те Сталинград патĕнче çĕнĕрен катастрофа тÿснипе кăна вĕçленчĕ, çакăн хыççăнах вĕсен Тунисра малтанхинчен пĕчĕкех мар тепĕр катастрофа тÿсмелле пулчĕ, тенĕ Жиро.

Унтан Жиро вăрçăн хальхи тапхăрĕнче французсем мĕнле тăни çинчен каланă. „Союзниксен войскисем Çурçĕр Африкăна пырса аннă вăхăтри тата çакăн хыççăнхи çĕнтерÿсене те француз войскисем пысăк пулăшу пачĕç. Германипе вăхăтлăх килĕшÿ туни француз войскисене хĕçпăшалсăр хăварчĕ, апла пулин те французсем çапăçу ĕçĕсене хутшăнса, хăйсен çарĕ йышĕнчен 20 процентне çухатрĕç: 75 пин çынран вĕсем 15 пин çын çухатрĕç.

Жиро юлашкинчен „Францире тăракан француз вăйĕсене", оккупациленĕ Франци çĕрĕнче тăракан нимĕçсене хуса кăларса, хăйсен çĕрĕ урлă Германие пырса кĕме çул уçма кирли çинчен чĕнсе каланă. „Франци пĕтмен-ха, анчах та вăл вилес патĕнчех",—тенĕ Жиро". Нимĕçсем заложникре тăракан французсене тата ытти французсене те хальхи пекех темиçе çул хушши вĕлерсе тăрсан,—тенĕ Жиро,—Франци хăйĕн малаллахи историйĕнче Германие хирĕç тăма вăй çитерес çук. 1940 çулхи катастрофăшăн Франци ответ тытмаллине Жиро йышăннă. „Çав катастрофа Франци хăйĕн пĕтĕм вăйне Германие хирĕç мобилизацилеме кирли çинчен ăнланманнипе тата вăл Англие çапса çĕмĕрчĕç ĕнтĕ тесе шутланипе пулчĕ", тенĕ вăл. Жиро хăйĕн сăмахне Сицилири вăрçă ĕçĕсем çинчен каланипе вĕçленĕ. „Сицилири кампани вăл Германи хытă тăнах аманнине пĕлтерет, ку кампани халĕ—пĕррремĕш актăн малтанхи сцени кăна пулса тăрать-ха",—тесе пĕлтернĕ Жиро. (ТАСС).

Юлса пыракан колхоза тивĕçлĕ пулăшу кирлĕ

Халĕ ĕнтĕ хĕрÿллĕ ĕç пуçланмалла. Анчах Какаçра шăп. Колхозниксенчен хăшпĕрисем килте лараççĕ, теприсем—таврари ялсенче хăнара çÿреççĕ, уйра ĕçлекенсем питех те сахал. Вĕсен куçĕ умĕнчех кăн-кăвак утмăл-турат тапса тухнă викăпа пăрçа уйĕпе çĕртме тумалли пуçă выртаççĕ. Тахçанах çумламалла, сухаламалла пулнă вĕсене. Паян та вăл ĕçсем чăсăлса пыраççĕ. Пĕлтĕрхи викăна халь те çапса пĕтермен. Утă çулса пуçтарас ĕçе те вăраха ячĕç; уборкăна япăх хатĕрленчĕç.

— Какаçсем пур ĕçре те юлса пыраççĕ,—теççĕ район работникĕсем.

Тĕрĕс. Ăна таврари колхозсем те курса тăраççĕ. Ахальтен мар вĕсем: «Какаçсем ĕçлемесĕрех тутă пурăнасшăн» теççĕ.

Эпир çак колхоза кăнтăрла умĕн çитрĕмĕр. Правлени канцелярийĕнче çак колхоз çумне çирĕплетнĕ ВКП(б) Обкомĕн уполномоченнăйĕ В. Быков тата колхоз счетоводĕ П. Ильин юлташсем лараççĕ. Вĕсем паян, çакăн пек уяр та лăпкă кунра ирех пуху туса ирттерме шутланă. Вăхăт кăнтăрла çитет,—çынсем çук. Кăнт ларсан икĕ çамрăк çитсе кĕчĕç. Вĕсем хыççăн ватă колхозник Григорий Лукич çитрĕ. Çапла вара темиçе хут хăвалаттарса та ир пулмалли пуху кăнтăрла иртсен 4 сехетре çеç уçăлчĕ. Унта та пулсан колхозниксенчен çурри те пыман.

Колхоз счетоводĕ каланă тăрăх, колхозра ĕçлеме пултаракансем — 85 çын, вĕсенчен обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçкунĕсен минимумне тултарманнисен йышĕ 30 процента çитет. Акă вĕсенчен хăшпĕрисем: Евдокия Семенова, июнĕн 15-мĕшне çитиччен вăл 1,84 ĕçкунĕ çеç тунă. Хуть те мĕнле ĕçе хушсан та, вăл итлемест, ирĕкре çÿресех вăхăта ирттерет.

Анастасия Иванова 27 çулта çеç. Колхоз ĕçне хутшăнма унăн пур майсем те пур, çемьере 5 çулхи ачисĕр пуçне урăх никам та çук. Анчах «пилĕке авасшăн» мар вăл. Иртнĕ çулта пĕтĕмпе те 80 ĕçкунĕ çеç тунă пулин те, ăна колхоз правленийĕ ответ тыттарман. Çавна пула кăçал та çавăн пек пулассине шанать вăл, ултă уйăх хушшинче те 12,25 ĕçкунĕ çеç тунă. Кахал пирки унăн килти хуçалăхĕ те юхăнать, амбарсем пуррчĕ, вĕсене сутса çисе ячĕ выльăх-чĕрлĕх çук.

Гликерия Мешковапа Татьяна Арсентьева пирки те çавнах каламалла. Ĕç кунĕсем сахал вĕсен, ĕçе „çемьере ачасем пур» тесе тухасшăн мар вĕсем. Анчах тÿрĕ колхозниксем унпа килĕшмеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенинчен нумайрах тата пĕчĕкрех ачасемлĕ хĕрарăмсемех ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Кам пĕлмест акă Ксения Никитинăна. Унăн виçĕ ача, чи кĕçĕнни 2 çулта çеç, упăшки—фронтра. Çураки вăхăтĕнче Никитина юлташ суха тунă, утă çинче—утă çулчĕ, çум çумланă т. ыт. те. Çавăнпа унăн ĕç кĕнеки çинче 52 ĕçкунĕ шутланать. Ефимова колхозница та кăçал 100 ĕçкунне яхăн тунă. Анчах сахал ун пеккисем колхозра. Хăшĕсем акă ĕçкунĕсен минимумне тултартăмăр тесе, васкавлă ĕçсене тумалла тухнех, ирĕкелле кайма пăхаççĕ, е ĕçкунĕ сахал килет тесе тухасшăн мар. Çавна пула колхоз ялхуçалăхĕн чи ответлă тапхăрĕсенче ĕçе вăраха хăварать.

Колхозра агитацилле-массăллă ĕçе япăх организациленĕ. Колхозниксем çĕршывра пулса иртекен хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăраймаççĕ, агитаторсем çук. Ялти комсомолецсем Р. Ядринцева, А. Яковлева, В. Ядринцев бригадăсене тухса çÿремеççĕ, нимĕнле калаçусем те туса ирттермеççĕ. ВКП(б) Обкомĕн Уполномоченнăйĕ Быков юлташ çеç сайра хутра кĕске калаçусем тăвать. Стена хаçачĕ вăхăтран вăхăта тухать, мĕншĕн тесен редколлеги массăпа тачăн çыхăнса ĕçлемест. Канцелярири çурчĕ умĕнче хĕрлĕпе хура хăма çакăнса тăрать. Анчах вĕсем çине чылай вăхăт ĕнтĕ нимĕн те çырмаççĕ.

— Кулленхи ĕçĕн итогĕсене çырса пыма май çук-и вара?—ыйтрăмăр эпир колхоз счетоводĕнчен.

— Май çук çав, ĕçре уравниловка, колхозниксен ĕçне уйрăммăн учета илмеççĕ,—ответлерĕ вăл. Паллă, çавăн пек ĕçлесен ăçтан-ха ĕç тухăçлăхĕ ÿсĕ, ăмăрту пулĕ?

Какаçри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Элĕк районĕнче юлса пыракан колхозсенчен пĕри. Ун çинчен ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн работникĕсем пĕлсе тăраççĕ. Темшĕн вара унăн ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ, шаннă та Быков юлташ çине, вăл лайăхлатса ярасса кĕтеççĕ. Анчах Быков юлташ хăй кăна нимĕн тума та апрать, вăлах бригадир вырăнне çÿрет, председатель ĕçĕсене тăвать т. ыт. те. Шăп пĕр уйăх ăкă колхозра председатель çук. Малтан ĕçленĕ председателĕ Ефимова Хĕрлĕ Çар ретне илсен, ун вырăнне продавец пулса ĕçлекен П. Васильева суйланăччĕ. Темшĕн паян кун та вăл ĕçе йышăнмасть.

Колхоз уйĕнче ыраш пулса çитрĕ. Часах çуртри тыррисем те пулса çитеççĕ. Анчах Какаçсем ăна пуçтарса кĕртме хатĕр мар. Вăрçă вăхăтĕнче кун пек ĕçлеме юрать-ши? Юрамасть! Ку вăл преступлени туни пекех!

Х. ЛИСИН.

ЭЛĔК, (хамăр корр.).

Союзниксен Сицилири войскисен вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Америка войскисем Кальтаниссеттăна йышăнса илнĕ. (Кальтаниссетта вăл—Агриджентăпа Энна хушшинчи чугунçул çинче).

Америкăпа Канада войскисем Пьяцца-Америна ятлă пункта йышăнса илнĕ. Ку пункт Энна хулинчен 10 мильăра тăрать.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи войскисем Катания хулинчен 3 миля кăнтăрарахра тăраççĕ. Унта вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Сывлăшри разведка пĕлтернĕ тăрăх, тăшман войскисем шоссе çулĕсемпе чугунçулсем тăрăх Мессина хули патнелле чакаççĕ. Вĕсем хăйсемпе пĕрле йывăр тата çăмăл хĕçпăшала та куçарса каяççĕ.

Союзниксем Силицире ку таранччен 35.000 салтака тыткăна илнĕ. (ТАСС).

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: июлĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла Англи самолечĕсем тăшманăн Çурçĕр Францири объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Голланди çыранĕсем патĕнче тăшманăн сутуилÿ суднисене атакăланă.

Пĕлтерÿ

Кăçалхи июлĕн 25-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре, Крупская ячĕпе тăракан садра ВКП(б) Хула Комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕ тата Хĕрлĕ Çар Çурчĕ Тинĕс-Çар Флочĕн Кунĕ ячĕпе вечер ирттереççĕ.

Вечерта:

Тинĕс-Çар Флочĕн Кунĕ çинчен доклад,

Ун хыççăн — концерт пулать.

Билетсене ВКП(б) Горкомĕн парткабинетĕнче илмелле (Чувашская, 6).

ВКП(б) Горкомĕ.

Хĕрлĕ Çар çурчĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

июлĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

ОНА ЗАЩИЩАЕТ РОДИНУ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

В старом Чикаго

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Лесоохрана Управленине экономист, машинистка тата делопроизводитель кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Уріцкий урамĕ, 36.

2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.

ИГ 1790